# Тупмалли

## Эх, ўсетпĕр.

### Сăвăсем.

Çуркунне
Каппайчăк çилпе ырă хĕвел
Çумăрлă кун
Çумăр
Автан
Така
Витаминлă утă
Савăк ир
Купăста
Эх, Ўсетпĕр
Диета
Пулăшăр!
Пылак марине
Иккĕшне те юрататăп
Чарусăр
Тунсăх
Йывăçсем тĕлĕреççе
Çĕнĕ çул
Тавлашу
Ытарайми çĕршыв
Калаçу
Тăхтав
Хастаррăн утатпăр. *Юрă*
Яковлев мăнукĕсем

## Ваççук пăтăрмахĕсем.

### Калавсем.

Чăваш чĕлхи кружокĕнче
Чунпа пуян çын
Пылчăклă пушмак
Пĕрремĕш çĕнтерЎ
Яланах тимлĕ пулăр
Шăна
Талантлă ача
Шăл ыратни
Вĕренмелли нумай

## Çуркунне.

Çурхи кун асамлăхне сапать,
Кайăк-кĕшĕк савăнса юрлать.
Анаслать пĕр ватă тунката:
- Кахалах эп тухрăм, тупата.
Çуркунне сипетлĕхне ĕçес,
Çут çанталăк пек чечекленес.

## Çумăр.

Тартăм эпĕ çумăртан -
Чупрĕ çумăр хыçăмран.
Çывăхрах ав ват юман -
Пур-ха çăлăнăçăм ман.

Çитрĕ çумăр васкаса,
Аçа-çиçĕм кăларса.
Эх, силлет вăл юмана,
«Тух унтан!» -
хистет мана.

Кĕмсĕртетрĕ аслати:
«Эй, итле, этем ачи!
Çиçĕм çиçнĕ вăхăтра
Аякра тăр йывăçран.
Шыв ислетнĕ йывăça
Пултарать çапма аçа».

## Витаминлă утă.

Ыра кун сана, ĕне!
Пĕлтерсем ĕçне-хĕлне.
Му-у-у! Çӳретĕп-ха пĕр май.
Ан чăрмантар, иртсе кай.
Эп васкатăп халь киле,
Ман унта сĕт леçмелле.
Кĕркунне çитет, Çтаппан,
Утă хатĕрле, ан ман.
Кĕтĕве кĕçех чараççĕ,
Картана пире хупаççĕ.
Витаминлă утине
Çимелле çине-çинех.
Сывлăхлă ӳсес тесен
Кирлĕ сĕт ачасене.

## Эх, ӳсетпĕр.

Шăллам аллинче - «Растишка»,
Ман - сĕткен, «Фруктовый сад».
«Улăп пек пулап», - тет Гриша.
Эп те улăп пек пулап.

Эх, çиетпĕр, эх, ĕçетпĕр,
Тавлашатпăр, виçĕнетпĕр.
Кунсерен ĕмĕтленетпĕр
Аттене хуса çитетпĕр.

## Иккĕшне те юрататăп.

Хамăр ялта - асанне.
Кӳршĕ ялта - кукамай.

Кукамайпа асаннене
Курас килет ман пӗрмай.

Кукамая курмалла -
Чупап кӳршӗ ялалла.
Ай-хай кукамай
Кукăль çитерет пӗрмай.

Ялта кӗтет асанне,
Эп васкатăп ун патне.
Ай-хай асанне
Çитерет мӗн тутлине.

Иккӗшне те юратап,
Иккӗшне те пулăшап.
Асаннепе кукамая
Ыр кăмăлшăн тав тăвап.

## Çӗнӗ çул.

Ёлкăна ёлкӗреймерӗ
Хӗл Мучи. Ăçта çӳрет?
Вупăр карчăк кӗттермерӗ -
Пур çӗре те сӗкӗнет.

Уява ăна чӗнменччӗ.
Çитнӗ ав чӗнмесӗрех.
Кучченеç эпир кӗтсеччӗ
Килнӗ вăл парнесӗрех.

Ячӗ алăк «юрласа»,
Хӗл Мучи кӗрет кулса!
- Кӗç юлаттăм çывăрса!
Савăнать халь кайăк-кӗшӗк,
Чӗр чунсем те кӗшӗл-кӗшӗл.
Хӗл Мучи ташша чӗнет,
Ташласан парне сӗнет.

Эх, юрлатпăр, такмаклатпăр,
Сăвăсем хӗрсех калатпăр:
- Тавтапуç сана, Мучи!
Чи ырри эс! Чи-чи-чи!

## Ытарайми çӗршыв.

Ешерет тăван çӗршывăм:
Куç тулли уйсем-хирсем.
Вăрмансем ав куç хӗсеççӗ:
«Манăн ытама килсем».

Ай-хай савнă çӗрӗм-шывăм...
Пăхса ытармалла мар.
Тӗнчипе, таçта та шырăр -
Çук кун евӗр пархатар.

Чаранса тӑрса итлетӗп
Ирхи канлӗ шӑплӑха.
Чӗререн савма пиллет вӑл
Ҫак мухтавлӑ халӑха.

Ҫӗрӗм-шывӑм ҫитӗнтернӗ
Сумлӑ, паттӑр ентешсем.
Чӑваш ен чапне ҫӗкленӗ
Космоса ҫити вӗсем.

## Хастаррӑн утатпӑр.

*Юрӑ.*

Эпир ҫитӗнетпӗр
Кулса-выляса.
Шкулта вӗренетпӗр
Чунтан тӑрӑшса.

*Хушса юрламалли:*

Ҫӳлтен ҫут хӗвел
Савса ачашлать.
Ҫӗршывӑм ҫинчен
Чӗреҫӗм юрлать.

Хастаррӑн утатпӑр
Ҫут ӗмӗт патне.
Шыратпӑр, тупатпӑр
Чунсем ыйтнине.

Мӑнаҫлӑн саратпӑр
Пӗлӳ тӗнчине.
Чунтан тав тӑватпӑр
Учительсене.

## Яковлев мӑнукӗсем.

Аслӑ Атӑл ҫийӗн ир-ирех
Ялкӑшса ҫӗкленчӗ ҫут хӗвел.
Чӑваш енӗм, эс пӗртен-пӗрре,
Кунран-кун чечекленсе ҫӗнел.

Ӑнтӑлатпӑр ҫутӑ уҫлӑха,
Чыс, мухтав кӳретпӗр халӑха.
Янӑрать кунта чӑваш чӗлхи,
Пирӗншӗн вӑл пуринчен пахи.

Кар тӑрса чӑвашлӑха упрар,
Алла-аллӑн тытӑнса утар.
Тухӑҫра вӑранчӗ савӑк ир,
Яковлев мӑнукӗсем эпир.

Савӑнатпӑр, мухтанатпӑр,
Ҫут малашлӑха шанатпӑр.

## Пылчӑклӑ пушмак.

- Ну, Ваҫҫук, эсӗ халӗ пысӑк ӗнтӗ. Шкула ҫӳреме пуҫларӑн. Малашне пылчӑкпа вараланнӑ атӑ-пушмакна хӑвӑнах ҫумалла пулать, - йӑл кулса каларӗ пӗррехинче амӑшӗ. Асламӑшӗ ача хутне кӗресшӗнччӗ кӑна - амӑшӗ алӑпа сулчӗ. Ваҫҫук унӑн сӑмахӗсене хӑлхана чикмерӗ пулас: вӑл хӑвӑрт апатланчӗ те компьютерпа вӑйӑсем выляма пуҫларӗ.

- Чим-ха, ывӑлӑм, вӑййусем тармӗҫ-ха, каласа пар-ха шкулти, класри ӗҫсем ҫинчен, - пырса тӑчӗ амӑшӗ.

- А-а-а! - алне сулчӗ Ваҫҫук, - нимех те интересли пулмарӗ паян. Сӑмахсене сыпӑкӑн-сыпӑкӑн вулаттарчӗҫ. Эпӗ вулама тахҫанах пӗлетӗп. Вуннӑ таран шутлаттарчӗҫ. Эпӗ ҫӗр таран шутланине эсӗ хӑв та пӗлетӗн.

- Тата мӗн интересли пулчӗ?

- Интересли-и? Физкультура урокӗнче пуринчен хытӑ чупрӑм. Мала тухрӑм. Мана учитель мухтарӗ.

- Маттур.

- Маттур тет-ха вӑл. Тӑхтавра коридорта хытӑ чупнӑшӑн ятларӗҫ мана. Эпӗ вара хытӑ чупма юрататӑп.

- Шкул вӑл урам мар-ҫке, ывӑлӑм. Унта мӗн чухлӗ ача. Пурте чупма пуҫласан мӗн пулӗччӗ-ши?

- Ха-ха-ха! - хыттӑнах кулса ячӗ Ваҫҫук, - стадион пулнӑ пулӗччӗ.

- Шкулта йӗрке пулмалла ҫав, - кулса ячӗҫ асламӑшӗпе амӑшӗ те.

Ваҫҫук ирхине шкула пуҫтарӑнма пуҫларӗ. Вӑл яланхилле амӑшӗ ҫуса тасатнӑ пушмакне тӑхӑнасшӑн пулчӗ. Пӗри тап-тасах. Тепри вара ӗнер хытса ларнӑ пылчӑкпах. Арҫын ача ним те чӗнмерӗ, ҫаплах тӑхӑнчӗ те урамалла васкарӗ.

- Ну, няняккам, пысӑк пӗлӳ илсе килмелле пултӑр, - ыр сунчӗ асламӑшӗ.

Пырать Ваҫҫук урампа таплаттарса. Паян тулта шӑнтнӑ.

- Ваҫҫу-ук! Эсӗ ӑҫта пылчӑк тупнӑ паян? - тӗлӗннӗ пек йӑл кулчӗ хирӗҫ килекен вӗрентекен. - Пылчӑкӗ шелленӗ тата сана. Пӗр пушмакна кӑна вараланӑ.

Арҫын ача аванмарланчӗ. Нимӗн те калаймарӗ вӑл.

- Атя васкар. Урока ӗлкӗрейменӗпӗр тата, - хыпалантарчӗ ӑна учитель.

Ваҫҫук шкултан таврӑнсан тӳрех тумтирне улӑштарчӗ те пушмакӗсене ҫума пикенчӗ.

- Ман мӑнукӑм пысӑкланнӑ иккен. Пысӑкланнӑ, ӑслӑланнӑ, - пырса ҫупӑрларӗ ӑна асламӑшӗ.

## Шӑна.

Нӑй, нӑй! нӑйкӑшать кӗрхи шӑна. Акӑ вӑл Ваҫҫук сӑмси ҫине пырса ларчӗ. Икӗ аллипе сӗт куркине ҫатӑрласа тытнӑ ача сылтӑм аллине вӗҫертрӗ те шӑнана хӑваласшӑн пулса хӑй сӑмсине шап! тутарчӗ. Ҫав вӑхӑтра сӗт курки вӑшт кӑна шуса кайрӗ те малтан Ваҫҫук чӗркуҫҫийӗ ҫине лаплатрӗ, унтан урайне ӳкрӗ. Ачан шкула ҫӳремелли шӑлаварӗ сӗтпе вараланчӗ.

- Эх, анранӑ шӑна! Мӗн туса хутӑн эсӗ манпа?! - сасӑпах ӳлеме пуҫларӗ Ваҫҫук. - Ыран шкула мӗн тӑхӑнса каяс?

Вӑл шӑнана хӑвалама пуҫларӗ. Лешне мӗн? Пӗр чӳречене пырса ҫӑпанать, пӗр сӗт кӳлленчӗкӗ ҫине ларать. Савӑнсах ӗҫет Ваҫҫук тӑкса янӑ сӗте. Нӑй, нӑй! нӑйкӑшать хӑй, ӑшӑ кунсем иртсе кайнӑшӑн кулянать пулас.

Шӑна хӑваласа ывӑннӑ Ваҫҫук шӑлаварне улӑштарчӗ те пукан ҫине ларчӗ.

- Сĕте типĕтсе пуçтарас пулать, - хăйпе хăй калаçрĕ ача. - Хам айăплă, мăран упа çури пек мĕшĕл-мĕшĕл çӳретĕп. Алăка асанне вĕрентнĕ пек хăвăртрах уçса хупсан шăни вĕçсе кĕрейместчĕ. Шкул тумне улăштарнă пулсан вăл та вараланмастчĕ.

Ача мунчала илсе сĕт кӳлленчĕкне типĕтме васкарĕ. Сĕтел айне пĕшкĕнчĕ те - кӳлленчĕк вырăнĕ çеç юлнă. Юнашарах кушак тăсăлса выртнă та мăр-мăр-мăр тесе Ваççука кусĕнчен пăхать. Сĕтпе хăналанăшăн тав тăвать паллах.

## Вĕренмелли нумай.

Вĕренӳ çулĕ вĕçленчĕ. Ваççукăн пысăк хуйхă. Унăн математикăпа «тăваттă» тухнă.

Тарăхать, вăрçать арçын ача хăйне. Хутламалли таблицăна сахалтарах вĕренчĕ пулас вăл. Шкулта вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ ятпа ирттернĕ линейкăра чи маттуррисене грамотăсемпе кĕнекесем парса чысларĕç. Ваççукăн чĕри сиксе тухасла тăпăртатрĕ ун чухне.

Пуçне усса килнелле утрĕ ача.

- Ну, ывăлăм, пиллĕкмĕш класа куçрăн пулать. Пысăклантăн. Мĕн салху эсĕ паян? - пуçран шăлчĕ ывăлне кăнтăрлахи апата киле таврăннă ашшĕ.

- Мĕн, мĕн? «Тăваттă» тухрĕ манăн математикăпа. Хам айăплă. Хутламалли таблицăна вĕренес чухне футболла ытларах вылярăм пулас.

- Халь тин нимĕн те тăваймăн. Малашне тăрăшас пулать, - сăмах хушрĕ асламăшĕ. - Атя лар сĕтел хушшине. Апатланма вăхăт.

- Анне ăçта?

- Аннӳ паян кăнтăрлахи апата таврăнаймасть. Ĕç нумай терĕ. Çапах та вĕренӳ çулĕ вĕçленнĕ ятпа торт туянса килме пулчĕ ĕç хыççăн.

- Эп «отличник» мар вĕт.

- Эсĕ пурĕ пĕрех чи маттурри, - пырса çупăрларĕ асламăшĕ.

- Атте, эсĕ шкулта ялан «пиллĕксем» кăна илнĕ-и?

- Ялан тесе улталас килмест. Пĕррехинче «иккĕ» те илнĕччĕ. Анчах та хам йăнăша вăхăтра ăнлантăм пулас.

Ваççукăн ашшĕ шкула кĕмĕл медальпе пĕтернĕ. Кайран инженера вĕренсе тухнă.

Ашшĕ çӳлĕк çинчен икĕ çĕнех мар кĕнеке илчĕ те ывăлне тыттарчĕ.

- Çак кĕнекесене мана сан çулусенче шкулта парнеленĕччĕ. Эсĕ халĕ пысăк ĕнтĕ. Вуласа тух. Вĕренмелли нумай унта.

Ача чĕтрекен аллисемпе асăрханса тытрĕ кĕнекесене. «Тимур и его команда» ятлă пĕри. Теприн çине «Васёк Трубачёв и его товарищи» тесе çырнă. Хуплашкан шалти енне: «Николай Сыплатова аван вĕреннĕшĕн тата хăйне шкулта лайăх тытнăшăн», - тесе çырса хунă.

«Атте ача чухне юлташĕсене ман пек ура хурса ӳкермен пулас. Тăхтав вăхăтĕнче те ăмăртмалла коридор тăрăх чупман», - пăшăрханса шухăшларĕ ача.

Вăл васкаса апатланчĕ те «Васёк Трубачёв и его товарищи» ятлă кĕнекене илчĕ. «Васёк Трубачёван юлташĕсем манăннинчен мĕнпе уйрăлса тараççĕ-ши?» - кăсăкланчĕ вăл. Меллĕн вырнаçса ларчĕ те тимлĕн вулама пуçларĕ. «Вĕренмелли нумай терĕ-çке атте - манăн нумай пĕлес пулать», - пăшăлтатрĕ ача.